К 84.09(Чув)
А95
4-40147

Валем Ахун

УРХАМАХАМ ЧӖНЕТ ИНҪЕТЕ

Национальная библиотека ЧР
4-040147

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К 84.09/44В
А 95

Валем Ахун

УРХАМАХĂМ ЧĔНЕТ ИНÇЕТЕ

Сăвăсем
Поэма

Чăваш
кĕнеке
издательстви
Шупашкар
1982

84.3 Чув
Ах 95

4-40147

ПРОВЕРЕНО
2010

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

Ахун Валем.
Ах 95 Урхамахăм чĕнет инçете: Сăвăсем, поэма — Шупашкар. Чăваш кĕнеке изд-ви, 1982.— 72 с. 30 п.

Автор хăйĕн сăввисенче паянхи çыннăн шухăш-кăмăлне, чĕринчи хавалне, ун ĕçри хастарлăхне, юрагăвне кăтартма тăрăшнă. Кĕнекере ĕлĕкхи асаплă пурнăçа сăнласа паракан произведенисем те пур. Вĕсенче эпĕр чăваш халăхĕн оптимизмне, паттăрлăхне, çутă ĕмĕтне куратпăр.

А $\frac{0763-059}{М136(03)-82}$ 51—82 4702650000

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1982 ç.

ÇĂЛКУÇĂМ, СĂПКАМ...

ЮРЛАМ САН ЯТНА...

Пехет те пехил атте кил-çуртне,
Мухтав та тивлет суха кассине.
Эп чупнă кунта çарран ачаран,
Вылянă шух пуç, юлман тантăшран.
Çӳренĕ хирте кĕтӳ хыçĕнчен,
Тыр вырнă хастар, тара ӳкиччен.
Юрланă хавас каçхи вăйăра,
Ташланă йăлттам туйăра та çуйăра.

Сăвап ĕмĕре анне çăкăрне,
Сăвап ĕмĕре анне тăварне.
Таяп умăрта паян пуçăма,
Çутатăр ялан умри çулăма.
Çăлкуçăм, сăпкам—эс, Кипеккасси—
Ачалăх юрри, хуркайăк сасси...
Пиллем эп сана чунри мулăма,
Юрлам сан ятна—чунри юррăма.

ШУР ÇАМКАЛЛА УРХАМАХĂМ

Шур çамкаллă урхамахăм,
Эс манман мана...
Эх, каяр-и, çывăх тусăм,
Кĕçĕр выртмана.
Сиплĕ шыв унта ĕçтерĕп,
Çитлĕп çилхӳне.
Выртăп та вара асилĕп
Иртнĕ кунсене...
... Эп санпа Шăмпай пек кайăп
Сар хĕр вăрлама.
Çĕклĕп те вăр-вар — ыталăп
Эп ăна çумма.

Эх, юнатăр, хăвăлатăр
Ашшĕ ман хыçран.
Пĕтĕм ял хĕрсе калаçтăр
Çуй иртсен, кайран.
Е пĕр каййăпăр хавассăн,
Сĕлкĕ вĕçтерсе,
Қасăн-касăн, ялăн-ялăн,
— Акатуй! — тесе.
... Шур çамкаллă урхамахăм,
Эс манман мана...
Эх, каяр-и, çывăх тусăм,
Кĕçĕр выртмана.

*

Çуркунне, ман ачаш ачам пек,
Чĕвĕлти шăнкăрчла калаçать.
Тĕнчене ыйхинчен вăратса,
Йăлтăркка тенкĕсем, ав, çакать.

Çуркунне, ман чипер аппа пек,
Ытарми тĕрĕсем тĕрĕлет.
Тăрнасен картине шуйхатса,
Шăнкăрти юрăсем кĕвĕлет.

Çуркунне, ман хастар атте пек,
Шуçăмпах ĕçлемешкĕн тухать.
Уй-хирсен шăплăхне хускатса,
Хĕвел пек пĕрчĕсем сапалать.

УЛĂХСЕМ ЧЕЧЕКРЕ

Улăхсем чечекре,
Палансем çеçкере.
Сарана — сар чечек —
Курăнать хĕвел пек.

Хӗрлӗхен тумпала
Çиçкӗнет тупалак.
Туй тăвaç ӗшнере
Ҫайăксем ир-ирех...
Савăнса, юрласа
Эп утап ухăнса.
Çупăрлап хурăна,
Ачашлап çăкана.
Тăванъенӗм — Хырла,
Шăнкăрти Ҫайпăла —
Ыталам ыриччен,
Ҫуççулли тухиччен!
Эс парсам çунатна
Ярханах ачуна.
Эп вӗçем ярăнса,
Чарлан пек çил касса.

1948 ç.

Ҫурни эс ӗçлесе
Хура тар çапиччен,
Шăммусем суриччен?
Ҫурни эс юрласа
Сассу пач çӗтиччен,
Ҫуççулли тухиччен?

Ҫурни эс тиесе
Шпал та рельс, сивӗре
Ăшăтса тимӗре?
Ҫурни эс чул ватса,
Чутласа тусене,
Тăлласа çилсене?

Ҫурни эс тытайса
Аллунта ӗç хӗмне,
Тутанса ун симне?
Ҫурнисем сан пулсан —

Ларсам эс юнашар,
Асилсе қалаҫар...

1949 ҫ.

Сиксе вылян кăвайт пек хыпрăм-ҫунтăм,
Алла усмарăм эп хĕрӳ ĕҫре.
Чугун ҫулсем те хыврăм, чулҫă пултăм,
Ташша тăрсан — ҫаптартăм пит хитре.

Ӳте касса, шăнтаслăн шăтăр-шатăр,
Улатчĕ кутсăр-пуҫсăр ҫил-тăман.
Анчах эпир кашни кăварлă, паттăр,
Нимле хĕне-терте те парăнман.

Туссен юрри каллех мана чĕнсессĕн,
Йыхрав ярсан кайма инҫе-инҫе:
— Тăван ҫĕршыв кĕтет пире! — тесессĕн,
Тытма эп хатĕр хуть мĕнле ĕҫе.

Ята унта ĕҫпе ҫырса хăварăп —
Қайла тытса эп ватăп ҫирĕп чул.
Қермен ҫуртсем юрла-юрла хăпартăп,
Қĕпер эп тăвăп, хывăп аслă ҫул.

ҪУНАТ САНА ЭП ПАРĂП...

Ҫуначĕ ун — хăлатăн пулнă, тет,
Вĕри чĕри — этемĕн пулнă, тет.

Авалхи халапран.

... Вĕҫет хăлат мăнаҫлăн,
Чăмать ҫиле касса.
Хĕвел кулать хаваслăн,
Чул ту ҫине ларса.

Хытса кайса пӑхатӑп
Ҫакна — черчен пепек.
Унтан алла саратӑп,
Вӗҫес тесе тӗк пек...

— Тӳпе кунта янравлӑ,
Епле сенкер, таса.
Ачам, патвар, тӑтхаллӑ
Ӳссем этем пулса.

Ҫунат сана эп парӑп,
Ырра сунса — халал!
Ҫилсем патне хӑпартӑп,
Чунна кӗртсе хавал!..

Хистетчӗ шав хӑлатӑм,
Патвар пулма чӗнсе,
— Сана кӗтет ҫунатӑм —
Атя, васка! — тесе.

Пӑхса ҫапла хастарлӑн
Ҫӑвак хӑлат ӗҫне,
Вӗрентӗм эп мӑнаҫлӑн
Чунпа ҫӳлте вӗҫме.

САР ХӖВЕЛ ПЕК ҪӖНӖ ҪАКАР

Авӑн ҫапнӑ. Килчӗ ҫитрӗ
Ҫич тивлетлӗ Кӗр сӑри.
Ак, килтен киле кӗҫ иртрӗ
Ир-ирех йыхрав юрри:

— Сар хӗвел пек ҫӗнӗ ҫӑкӑр,
Ай, хурар сурпан ҫине!
Вӑл паян Ӗҫ чапӗ, пӑхӑр,
Сим парать Кӗр сӑрине!

Ёнтĕ йӳçнĕ сар хăмлаллă,
Сиплĕ, кăпăклă сăра.
Эй, ларсам, тăван, хаваллăн,
Сум тума сĕтел тавра!

Тулнă уйăх пек шăрттанăм,
Çулçă пек хитре — хуплу.
Эс пырса паян, тăванăм,
Çĕнĕ çăкăр тыт, чыс ту!

Пултăр эсĕр пит хастарлă
Уй-хирти кĕрешӳре.
Халь ларар, тăван, хаваслăн
Куç тулли кĕрекере!

Ай, пырсамăр, чыс тусамăр —
Чаплă пултăр Кĕр сăри!
Çĕнĕ çăкăр тутансамăр,
Юхтăр ун ятне юрри!

... Қасăн-касăн, шур уртмахлă
Ир-ирех çӳрет йыхрав.
Çитрĕ Кĕр сăри мухтавлăн,
Ман ялйыш пуçлать уяв.

ЭП АННЕ ПИЛНЕ МАНМАН...

1950 ç.

Иккĕн ларнă каçсене
Асилеп, Веруçăм...
Çав каçсенĕн илемне,
Çук, манаймăп, тусăм.

Чун юратнă хӳхĕм хĕр
Маншăн эсĕ çеçчĕ.
Иккĕн час иртетчĕ çĕр,
Шуçăм ир килетчĕ.

— Алтăр тайлăк,— теттĕн эс,
Ҫĕç ална параттăн:—
Шурă тĕлĕк пиелес,—
Тесе йăл кулаттăн...

Таврăнаттăм эп вара,
Шухă пуç, телейлĕн.
Ҫĕрĕм-шывăм ман тавра
Туй тăватчĕ меллĕн.

... Халь инçе санран, Веруç,
Эп инçе пурнатăп,
Савнă чунăм, çырă куç,
Чикĕ эп сыхлатăп.

Ан хăяйтăр ют-тăшман
Сар куна пăсмашкăн.
Эп анне пилне манман —
Чăн салтак пулмашкăн.

...Ҫуммăн ларнă каçсене
Асилеп, Веруçăм.
Ҫав каçсенĕн илемне,
Ҫук, манаймăп, тусăм.

*

1955 ç.

Шараф Мударриса

Ҫĕрлерĕ кĕр! Хура Ҫата —
Тăван ялу, Шараф-ага.
Ҫăтартрăн эс тутар чунне,
Чĕнсе мана Сабан туйне.
Ҫăтартрăн эс сӳнми Илем —
Чĕре вăйне çĕклен хĕлхем.
Ҫуртун сăйне, чысне курса,
Ларатăп халь кунак пулса.

Тальян юрлать, ташлать курай,
Ҫуҫне шӑлса илет бабай.
Ҫӗвве майпен тӑса-тӑса,
Ҫайри кунне илет аса:

— Хура Ҫата — хитре Ҫата,
Пулан пуль эс кӑҫал хӑта.
Хура куҫне, чипер хӗрне,
Паран пуль эс мана пӗрне...

... Хура Ҫата, ӗлккен кӗтес,
Асран нихҫан тухмастӑн эс.

ЛАРАТАП ТА ШУР ЧУЛ ҪИНЕ...

Аптӑрать хай хаяр Супетей
Илейменшӗн Сӑвар хулине...

«Шапатан тухатмӑш»
юрӑран.

Час-час килетӗп эп кунта,
Чуна туртать ҫап-ҫут Вӑта.
Ларатӑп та шур чул ҫине —
Ҫитеп вара ҫулпа пине...
Путатӑп эпӗ шухӑша,
Ҫӳреп пин ҫул аша-аша,
Илтеп сасартӑк хӑш чухне
Уртан сехреллӗ сассине.
Ҫилсе тухать хура утпа
Нӳкер, хӗҫпе те хӗм-вутпа.
Утап вара вӑрҫа тухса —
Ҫистен ҫакса, чукмар тытса.
— Тӑшман таптать тӑван ҫӗре,
Чура тӑвасшӑн вӑл пире!
Ҫӗрне-шывна, ачам, сыхла,
Ҫӑрал тытсам эс арпуҫла!—
Пиллет мана тӑван анне,
Парса аттен кӑвак хӑртне.

Пиллет мана вӑрман, уй-хир:
— Ҫалла ан чак! Хурах вӑл, хир!
Арҫын ятне тытса чысра,
Вучах вутне куҫ пек упра!..—
Хиреп вара эп тӑшмана,
Ҫӗршыв парать вӑй-хал мана.
Ҫӗҫех хурах сӑрне ярать —
Чӑл-пар тусать, чакать, тарать!
Ҫаллех хӗвел хавас ҫиҫет,
Хирте тырпул тулса пиҫет...

... Час-час килетӗп эп кунта,
Чуна туртать ҫап-ҫут Вӑта.
Ларатӑп та шур чул ҫине —
Ҫитеп вара ҫулпа пине...
Йлтеп сасартӑк хӑш чухне
Уртан сехреллӗ сассине.
Утап вара вӑрҫа тухса —
Ҫистен ҫакса, хӑрта тытса...

*

Ҫилтен ялйыш ҫине тухсан —
Эс кил элчи.
Пул эс килйыш элемӗ,
Пул эс килйыш илемӗ.

Ялтан ҫӗрне-шывна тухсан —
Эс ял элчи.
Пул эс ялйыш элемӗ,
Пул эс ялйыш илемӗ.

Ҫӗршывунтан юта тухсан —
Ҫӗршыв элчи.
Пул эс Ҫӗршыв элемӗ,
Совет ҫыннин илемӗ.

*

Л. Таллерова

— Мухтав термен кĕртен Çутта!—
Ҫалатчĕ харсăр чун Митта.
Çавтер Çутта, тăван, санра
Ҫурап пурнан кашни кунра.
Çумри тус-йыш çапла пулсан,
Çутти çунса хĕмне парсан —
Утма хаваслă, кун аван,
Хăвна хастар, патвар туян.
Пырать вара ĕçӳ кал-кал,
Такан авать чунри вăй-хал.
Хĕрсе тăрсан пирте тату —
Уксахлăн сикмĕ сан уту,
Çулна пӳлеймĕ чăнкă ту,
Çĕршывшăн çиçĕ хăвату!
Çакна пĕлмен этем, чăнах —
Ăспа айван, чунпа чăлах.

*

Аннене

Ешĕл пыллăх хĕрринче
Ҫапăр ял ларать.
Çав ялта, шап-шур пӳртре,
Ҫарчăк пурăнать.

Ир хутать вăл кăмака —
Ҫăрт, хуплу хывать.
Ҫĕç, майланă май шăрттан,
Çул çине пăхать:

— Çук, паян та килмест пуль
Ывлăм-çимакур...
Çитрĕ пуль тĕнче касса,
Ĕç килте те пур...

... Сар ачан ĕç пит нумай —
Çулĕ ун пĕтмен.
Çичĕ тинĕс леш енне
Вăл ишсе çитмен...

1975 ç.

М. Илпеке

Тухъя хитре — ахах куçпа,
Этем хитре — таса чунпа
Текен сăмаҳ час-час илтеп,
Ун чух сана аса илеп...
Çавна, чунри тасалăха,
Шанса паран хаваллăха,
Қурайрăм ватă аннӳнте,
Тупайрăм санăн килӳнте.
Сивлекчĕ шурă Шупашкар,
Хама курма та çăмăл мар...
Мана вĕрентрĕн эс мĕн чул,
Тупма пиллерĕн çирĕп çул.
Вулатчĕ сăвă пахчунта
Чалтун чăваш — поэт Митта.
Асрах: хурланчĕ ун чĕри,
Тăсса ярсан «Қикак юрри».
— Қикак, кикак, çумма ларсам,
Қиле кайма çунат парсам...—
Хĕвеллĕ чун, Миккуль тете,
Эп куртăм санăн чĕрӳнте,
Эп тупрăм санăн килӳнте
Ыр кăмăл, туслăх та хевте.
Ӑçтан манам, эппин, çавна,
Ӑшши çĕклет халь те чуна.

ЭП ИЛТЕП САССАРА...

Хаш сывлас пек сăртсем — Улăпсен тăприсем,
Çывăраççĕ унта халапри паттăрсем...

Эх, мĕн чухлĕ эсир ман Тăван çĕршывра —
Чечек евĕр ĕлккен ытарми Чăвашра.
Нумай курнă эсир ухăсем вĕçнине,
Хирсене хĕретсе вĕри юн юхнине.
... Аçтаха пек тăшман шав килет сăхланса,
Ялсене, хулине çаратса, çунтарса.
Ҫарах тухнă тăрса Улăпсем çапăçма,
Ҫăтăхан тăшманран Ҫĕршыва сыхлама...
Ҫупаланнă вара çӳл сăртсем — масарсем,
Унта выртнă хастар, вут чĕре йĕкĕтсем,
Ҫарталаннă вĕсем таçтанах куранса,
Выç куçла пăхкалан тăшмана хăратса.
Паттăрсем, Улăпсем! Эп курап сăнăра,
Пурăнатăр эсир ĕмĕрех халăхра.
Тăпра мар эсир, çук! Пирĕнпе, пурнăçра,—
Ĕмĕрсен хушшинчен эп илтеп сассăра!

ЭП УТАТАП ХИРПЕ ПĔР-ПĔЧЧЕН...

(Митта Ваçлейĕ вилсен)

Сан иртнĕ ĕмĕрӳ, çĕре кĕнĕ поэт,
Чуна пăчăртаса ялан аса килет.

Çеçпĕл Мишши.

Ҫил улать, çил улать, çил улать —
Этем пек хӳхлесе вăл чупать.
Эп утатăп хирпе пĕр-пĕччен,
Вăй кайса, тăрănса ӳкиччен...
Ҫăра çил, эс ытла ан ула,
Тăвăлна каялла хăвала.
Ҫумăрпа ан кастар, ан лӳшкет —
Чĕрем хурлă капла та, йĕрет.
Арапуç, хурланса тус-йышпа,
Сывпуллашнă ĕнер сăвăçпа...
Ҫаласамăр, хирсем, вăрмансем,
Ҫак хуйха эп епле-ха тӳсем?..
... Ҫил улать, çил улать, çил улать —

Тĕнчепе тулашса макăрать.
Эп утатăп çĕрле пĕр-пĕччен,
Вăй кайса, тăрăнса ӳкиччен...

ВЫРТАТЬ ВĂЛ ВĂРÇĂ ХИРĔНЧЕ...

Тăрнасем те çитрĕç çурпа савăнса,
Хăçан эсĕ, ылăм, килĕн çаврăнса...

Асанне хӳхлевĕнчен.

— Эй-хей, çилсем, кăвак çилсем,
Çурман-и манăн аслă ывăла?
Ăçта çӳрет-ши хаклă чĕппĕм,
Ăçта выртать-ши ылтăн чĕппĕм?..
— Выртать вăл вăрçă хирĕнче:
Тăпри — чаларнă ту çинче,
Çулли — хĕвелĕн куллинче,
Юрри — шаланкă юрринче,
Ташши — тип çиçĕм ташшинче.

— Эй-хей, хумсем, шупка хумсем,
Çурман-и ман вăталăх ывăла?
Ăçта çӳрет-ши хаклă чĕппĕм,
Ăçта выртать-ши ылтăн чĕппĕм?..
— Выртать вăл вăрçă хирĕнче:
Тăпри — сив тинĕс утинче,
Çулли — сар уйăх куллинче,
Юрри — шур кайăк юрринче,
Ташши — шух çилĕн ташшинче.

— Эй-хей, çăлсем, юхан çăлсем,
Çурман-и манăн кĕçĕн ывăла?
Ăçта çӳрет-ши хаклă чĕппĕм,
Ăçта выртать-ши ылтăн чĕппĕм?
— Выртать вăл вăрçă хирĕнче:
Тăпри — хăвалăх çумĕнче,
Çулли — çут çăлтăр куллинче,
Юрри — чĕкеçĕн юрринче,
Ташши — сар шуçăм ташшинче.

ИКШЕР ЙĔРКЕН

* * *

Йытту — çуртна сыхлатăр,
Ачу — ятна упратăр.

* * *

Халал илсен — хаваллă,
Хастар пулсан — мухтавлă.

* * *

Пуçне кура калпакĕ,
Ĕçне кура сум-чапĕ.

* * *

Чĕрÿ çиççен çунатлă —
Этем, пулан хăватлă.

* * *

Кун — куна тĕсне парать,
Ăс — ăспа вăйне сарать.

* * *

Тутăх çинĕ тимсĕре,
Çăтăх çăтнă пилсĕре.

* * *

Пĕр хĕлхемрен — вирт хыпать,
Çур сăмахран — ят тухать.

* * *

Тимсĕр куçĕ тем енче,
Сĕмсĕр куçĕ — мул çинче...

* * *

Ултавăн чĕлхи яка,
Ултавăн чĕлхи палка.

* * *

Ялне нихçан та ыр туман —
Тĕнче касан, çиле хăван.

* * *

Асту, тытсан Шуйттан шутне —
Пуçна чикен ун тамăкне.

* * *

Акапуç сухара тутăхмасть,
Ĕçри çын нишлĕхпе мăртăхмасть.

* * *

Тĕпсĕр йăлт пĕтерчĕ кил-çуртне,
Пилсĕр, ав, шар кӳчĕ ялйышне.

* * *

Савтарсан та — чĕлхе савтарать,
Вăрçтарсан та—чĕлхе вăрçтарать.

* * *

Утас çул—сукмакран пуçланать,
Пултару — тăрăшсан куçланать.

* * *

Çичĕ ютăн çăкĕ — çич ту пек,
Савнă çĕрĕн çăкĕ — сывлăш пек.

* * *

Çемçетеймĕн çупа кукарсен кăмăлне,
Ăшăтаймăн вутпа типшекен чĕрине.

* * *

Ан ман çакна нихçан та, Çут тĕнче:
Тăратăн эс ака хурçи çинче.

Чувашская республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. ГОРЬКОГО

 4-40147

*

Пĕрре çынсем Суя чуна тытса
Персе чикеççĕ çĕр айне алтса.
Анчах çынсем кайсассăн, лăплансан,
Вĕсен çилли сӳнсессĕн, тамалсан —
Эсрел ăна кăларнă шăтăкран.
(Асту: вĕсем тăванлă, пĕр кăкран!)
... Суя татах та халĕ йĕксĕкрех,
Элекĕ ун татах та йĕплĕрех.
Çӳрет вăл паян кун та çĕр çинче,
Çын сăнĕпе ултавлăн витĕнсе.

*

Эп сан пек этемех çĕр çинче,
Сан пекех — пĕр хĕвел айĕнче:
Çитлĕ манăн та пурнăçăм — кур,
Мĕн калас, терт-нушам та ман пур

Эп сан пек этемех çĕр çинче,
Сан пекех — пĕр хĕвел айĕнче:
Сиввĕн хăртрĕç — хутлантăм лаштах,
Ăшшăн пăхрĕç — çĕклентĕм яштах.

Эп сан пек этемех çĕр çинче,
Сан пекех — пĕр хĕвел айĕнче:
Хурланатăп — çынна макăртсан,
Чун вĕрет — чунсăра тĕл пулсан.

Эп сан пек этемех çĕр çинче,
Сан пекех — пĕр хĕвел айĕнче:
Хĕмленетĕп — савни юратсан,
Йăл кулса вăл мана тухатсан.

Эп сан пек этемех çĕр çинче,
Сан пекех — пĕр хĕвел айĕнче...

ТАВАТШАР ЙĔРКЕН

* * *

Этем ăспа пуян,
Этем ĕçпе пуян.
Туспа-йышпа пулсан —
Тата çĕр хут пуян.

* * *

М. Я.

Маншăн эсĕ хунтав та тĕрек,
Маншăн эсĕ тăван пек, пĕрре!
Эп уçатăп санпа чунăма,
Эп туптатăп санпа ăсăма.

* * *

Тек хурлатăр мана çав ăнман,
Тек çӳретĕр мана кышласа.
Чăн туссем пурнăçра ман нумай,
Эп ĕçлеп вĕсемпе юрласа.

* * *

Эп пĕлетĕп хуйхă тĕс-питне —
Тĕсĕ ун асаплă, хуп-хура.
Эп пĕлетĕп куççуль тутине —
Ун тăварĕ халь те ман чунра.

* * *

Хăшпĕрне эп курап: пăр пекех якашка,
Эпир пур — ачаран катрашка, шăртлашка.
Яп-яка пуличчен катрашкаллă пулам,
Пуринчен урăхла, хĕрлĕ çӳçлĕн курнам.

*

Анне тăпри çине

Аякка, аякка эп каяп ялăмран,
Тĕнчене килейсе çул пуçланă кунран...
Куççулли куçăмра,
Çук халь эс çумăмра,
Кам-ши парĕ алне эп ÿксен урaран?..

Утас çулăм инçе, курас кунăм самай,
Тăварне çиесси, ай, ман пулĕ нумай.
Пехилне асăнса,
Юрруна юрласа
Утаясчĕ, аннем, малалла ман пĕрмай.

*

Иртнĕ вăрçă çулĕсенче
çитĕннĕ тантăшăмсене

— Кала мана, пуçăм,
ан пытар, кала —
Мĕн-ма эс шуралтăн чалт хăвăрт капла?
— Арçын сухине пит ир тытнăран,
Анне куççульне час-час курнăран.

— Кала-ха, чĕрем,
ан пытар, кала —
Мĕн-ма эс хавшатăн хăш чух ак çапла?
— Ялйыш хуйхине ăша илнĕрен,
Хаяр тăшмансен сăнни тивнĕрен.

*

— Эй, ачалăхăм, çивчĕ урхамахăм,
Ăçталла васкатăн, ăçталла?
— Асчаха васкатăп, ăсчаха —
Аслай ватсем патне.
— Эй, ватлăхăм, кÿнсĕр урхамахăм,

Аҫталлаваскатӑн, ӑҫталла?
— Яшлӑха васкатӑп, яшлӑха —
Вӗри чунсем патне.

*

Ача чухне эп тӗлленеттӗм —
Ҫураттӑм чанкӑс утсене.
Йыхрав сасси унтан илтеттӗм,
Чупса тухаттӑм сӑрт ҫине...

Ҫашни кӑвак, кӑтра хӑрелле —
Мана кӗтетчӗҫ кӗҫенсе.
Ҫилхе парса, лартса пит меллӗн
Илсе каятчӗҫ вӗҫтерсе.

Ирччен вара ҫапла ҫӳреттӗм,
Вӑрманӑн, хирӗн ҫаврӑнса.
Ҫайран каллех эп тӗлленеттӗм —
Тусем каҫаттӑм ыткӑнса...

Текех ҫук халь ҫавтер асамлӑ,
Янравлӑ, ырӑ тӗлӗксем.
Аҫта эсир, ҫил пек ҫунатлӑ
Ачалӑхри кӑвак утсем?

*

Паян эп ҫӑлкуҫӗ тасатрӑм,
Юхтартӑм уҫса юшкӑнне.

Валак шур чултан эп майларӑм...
Тутантӑм тӑп-тӑрӑ шывне.

Иртен-ҫӳренсем ҫӑлран ӗҫчӗр,
Ҫиленччӗр сипет шывӗпе.

Вĕсен чĕринче ялан çиçтĕр
Илемлĕх, çак çăл шывĕ пек.

АСТАСЕН ЮРРИСЕМ

* * *

Кăлтăрт! кăлтăрт! çăм тапса,
Эй, çӳрер çăмат пусса!..
...Çĕр çине шур юр ларсан,
Çĕн тăла куян сырсан,
Кур, кĕтет пире ватти,
Çамрăк арăм, яш каччи.
Йăкăр-йăкăр хĕр ури —
Юр çине юлать йĕрри.
Çĕн çăматă тăхăнсан —
Ай, хитре-çке хĕр ури.
Йăрăс пӳллĕ каччисен —
Шав улахра ташшисем,
Сар хĕр çинче куçĕсем.
Кин кĕртес, теç амăшсем...
... Кăлтăрт! кăлтăрт! çăм таппи —
Ял çине каять юрри.
Çĕн çăматă тăхăнсан,
Ай, хитре-çке хĕр ури...

* * *

Юрла-юрла калай касап,
Тăхлан сĕрсе кăмкан саплап.
Юсатăп эпĕ сăмавар,
Юхать пулсассăн — кӳр те пар.
Епле килпетлĕ ку янтав,
Нихçан та ман пулман ултав.
Асту, хуçа, мана ан ман —
Ятне анчах ăна хăрман...
Хăш чух инçе тухса çӳреп,
Ялтан яла çитсе кĕреп.
Курап: мана пурте юмарт.
Чунна, ăстаç, çӳле хăпарт!

... Виçе-виçе калай касап,
Чечен хĕр пек кăмкан тăвап.
Юсатăп эпĕ сăмавар,
Юхать пулсассăн — кӳр те пар.
Тĕрлетĕп йĕс курка хитре,
Хĕрсем валли — шаккап витре.
Çапап тăҳа — утсем валли,
Çиçсе çӳретчĕр куç тулли.
Юрла-юрла калай касап,
Чечен хĕр пек кăмкан тăвап...

* * *

Хура сухал, хайман * тытти,
Эс те, мучи, ăслай ватти!
Шăрçа хушпуллă сар кинсем,
Ққачча каяс хитре хĕрсем!
Хаклашăр манăн тавара —
Хĕртсеттĕм хĕрлĕ курнара.
Тупаймăр таврара чапли,
Ққашнин çинче — ăста палли,
Сăрне пăхсамăр, тĕррине —
Кӳрет пасарăн илемне.

Сăра палаккĕр — аллă пус,
Ĕне чӳлмекĕ — вăтăр пус!..
Ан манăр тирĕк туянма,
Ққурки те пултăр савăнма.
Чӳлмекĕ лартăр сĕт-çупа,
Ққуркийĕ тултăр сим-пылпа!
... Чӳлмекçĕ эпĕ — чи чапли!
Ққашни чӳлмек — ăста палли.
Сăрне пăхсамăр, тĕррине —
Кӳрет пасарăн илемне!

* Хайман (авалхи сăмах) — сăранран çĕленĕ чаплă, пысăк енчĕк.

ЫРРИ ÇĔКЛЕНТĔР — ЫРĂПА

* * *

Пайтах чипер йăла-йĕрке,
Чуна çĕклен илем-нĕрке,
Хайланă пирĕн ваттисем —
Шап-шур сухаллă чăвашсем.
Вĕсем ăнланнă пурнăçа:
Ан кайтăр çулĕ пăрнăçа.
Чее суя-ултавăнне
Хуçасчĕ, тенĕ, пилĕкне.
Тупасшăн çуннă чăнлăха,
Кĕтсе кĕленнĕ ырлăха...
— Ĕрчевлĕ пул, ачам-пăчам,
Типсе ан лар хирти хăрчан.
Ан пултăр кунçулу харам,
Вĕлле хурт пек йышна курам.
Ĕçе юрат, ăста пултар,
Ятна ярса эс ан култар.
Маттур эс пул — маттур çынпа,
Çемçе ан пул — усал ютпа.
— Çын пул! — тесе хăй тăхăмне,
Хитре тăвасшăн ун чунне,
Килес кунри Ырра шанса,
Чăваш пилленĕ, ăс парса.
Тĕнче çине çав ыр ĕçчен
Асчах пек пăхнă пур енчен.

ЎССЕМ ЭС УЛĂП ПЕК ПАТВАР

*(Арçын ача çуралсан
калакан сăмах)*

Ўссем эс Улăп пек патвар,
Аçу пекех ăста, хастар.
Пĕве çитсен йăва хăтла,
Хуçа пулса шăрттан пуçла.
Ўстер йышна эс пил парса,

Ан юл хăр-тăлăххăн тăрса.
Ҫуçу шав пăхтăр кил енне,
Аллу сан пĕлтĕр ĕç тĕлне.
Ан пул хуранăн хуралçи,
Хĕрхӳ сăмахăн чĕлĕмçи.
Ан пул мăнттай, ан пул куштан,
Туман ĕçпе пач ан мухтан.
Пулсам упа эс тытакан,
Тукмак шăлне эс катакан,
Тĕрен хуçи те сухаçи,
Йăлттам утсенĕн кĕтӳçи,
Вучах хуçи, ун сыхкăчи,
Ҫилйыш ăшши те тыткăчи.

ĔÇНЕ ЭС ТУ ЮРЛА-ЮРЛА

(Хĕрача çуралсан
калакан сăмах)

Пул эс чипер, чул пек кĕрчен,
Аннӳ пекех ăста, ĕçчен.
Шăрçа пек çиçтĕр сан тĕррӳ,
Ҫăтат пек пултăр сан пиррӳ.
Хĕвел пек пиçтĕр çăкăру,
Сим-пыл пек юхтăр сан сăру.
Ула куракĕ тăриччен,
Хура чĕкеçĕ юрличчен
Хуран эс çак питне çуса,
Ҫĕрсем вăр-вар ĕне суса.
Ҫăвак çутпах эс тыт çурла,
Ĕçне эс ту юрла-юрла.
Ача ӳстер, ача лăпка —
Хавал кӳрет çурта сăпка.
Ҫилйыш шав тăтăр савăнса,
Тăван — курасшăн ăвăнса.
Ҫынна пулсам эс тарават,
Хăна килсессĕн — вашават.

АЧАШЛĂР САР ХĔВЕЛĔ ВĂЙ ПАРАН ÇĔРЕ

(Çĕр ĕçлекене калакан сăмах)

Тырра чунпа аксассăн — ырă эс акан,
Ăна чунпа акмастăн — хыт хатар сапан.
Хăйне чĕрипеле ачашлакан çынна,
Хăйне пур кăмăлтан пăхан хастар çынна,
Упăшкине хĕрарăм парне кӳнĕ пек,
Хаваслă хĕм ача çуратса панă пек,
Уй-хир сана чи хаклă илемне кӳрет,
Уй-хир сана сăваплă ырлăхне пӳрет.
Эсир те, Улăп пек маттур ачам-пăчам,
Эсир те, куç тулли юмарт ачам-пăчам,
Ачашлăр сар хĕвелĕ вăй паран çĕре,
Юратăр, хăтлăр симлĕ çак хура çĕре.
Ĕлккен уй-хир ун чух ӳстерĕ чăн тивлет,
Çĕршыв хăвачĕ — пĕл, санран нумай килет.

ЫРРИ ҪИЛСЕН — ХАНА ТАВАР...

Хĕвел каять те — таврăнать,
Сĕм каç килет те — çаврăнать.
Сивви пăрланĕ — сиввипе,
Ăшши хĕмленĕ — ăшшипе.
Усал тĕпленĕ — усалпа,
Ырри çуталĕ — ырăпа...

Вутпа килен хура çиле
Ан кĕрттĕр ырă вăй киле,
Çунтартăр тип уяр аçа,
Ырри, пулсам кунта хуçа!
Урса килен хаяр юта
Тустартăр çивчĕ хĕç, хăрта.

Çилпе килен — пĕтет çилпе,
Виртпе килен — çунать виртпе.
Шăмми-шакки типет хĕмпе,
Шăрши-марши вĕçет кĕлпе.
Усал тĕп пултăр — усалпа,
Ырри çĕклентĕр — ырăпа.

Ырри килсен — хăна тăвар,
Ури айне палас хурар,
Вучах умне ейме сарар,
Тăвар сипне — пехил парар.
Ырри сĕрлетĕр — ырăпа,
Чĕри çуталтăр — юрăпа.

ХУЛ ÇИНЕ ЛАРСАМ, ТЕКЕРЛĔК...

*

Сарă йĕкĕт ут çулать,
ай та вай,
Сарă йĕкĕт ваш! сулать,
ай та вай!
Ун çавийĕ, ах, витмест,
ай та вай,
Ун çавийĕ, ах, çиçмест,
ай та вай!
Витĕ халĕ витессе,
ай та вай,
Çиçĕ халĕ çиçессе,
ай та вай!
Савнă хĕрĕ çӳремест,
ай та вай,
Савнă хĕрĕ тимлешмест,
ай та вай...
Эх, чиперĕм — хĕр-пикеç,
ай та вай!
Эх, чиперĕм — чĕв-чĕкеç,
ай та вай,
Йĕкĕт чаплă, ан шуртар,
ай та вай,
Йĕкĕт сумлă, ан çунтар,
ай та вай!

*

Ķасри хĕрсем мунча кĕреççĕ,
Шартах параççĕ ăшшине.
Ķула-кула тухса сикеççĕ
Хăва хуплана пĕвене.

Шыва çурса йăр-яр ишеççĕ,
Выляççĕ тейĕн вутăшсем.
Йăмра хыçпе, ай-вай, килеççĕ
Чеен куç хывнă каччисем.

Кĕтмен çĕртен шăй-шай шуйланчĕ
Хĕрсен карти сенкер шывра.
... Илем самант куçран çухалчĕ,
Пĕве те халь салху, хура.

✿

Хĕрсем ирех тăраççĕ,
Ирех шыва анаççĕ.
Саван тусне курсассăн,
Тулли витре ăсаççĕ.
Кĕтни харам пулсассăн —
Çурри анчах ăсаççĕ...

Яшсем ирех тăраççĕ,
Çаран çине анаççĕ.
Саван тусне курсассăн,
Утне çемçен тытаççĕ.
Кĕтни харам пулсассăн —
Утне кăрт-карт тытаççĕ...

✿

Ĕлккен иккен тăван кĕтесĕм,
Хĕрĕсем епле чипер...

Халăх юрринчен

Хурасан, Хурасан, чечек пек яту сан,
Шутласан, ак, тухать: Кĕлистан... Хорассан *...
Вирьялра та çак ят килет пуль авалран,
Хăварман пуль ăна юрăран-сăвăран.

---

* Авалхи Персин аслă сăвăçисем мухтаса юрланă вырăнсем.

Халь ларар та çил пек юрттарар,
Тус-йыша пуçтарса туй тăвар...
Савнăран эп килтĕм савăнса,
Çăрхаях та ута вылятса,
Чун савниçĕм, сана шыраса.

*

Йĕкĕтсем, кимĕçсем! Қаçарсамăр мана
Хăвăртрах леш енне — чечекри Йăлăма!
Пурăнать халь унта вутăш пек чиперккем,
Ăш çунтармăш этем — хура çӳçлĕ пикем.
Çук, никам та кунта курăнмасть, сас памасть,
Қĕçĕре ун патне каçасси ман пулмасть...
Хуп-хура Атăл çеç пĕр шавлать, кăтăрать,
Ăшчике пăлхатса, çулăмпа çунтарать.

*

Лар, çунатăм, çумма —
Ачашлам.
Лар, çунатăм, çумма —
Юр юрлам.
Иртсе кайтăр хуйху та суйху,
Вăранайтăр чунри шăпчăку.
Лар, çунатăм, çумма —
Ынаклам.
Лар, çунатăм, çумма —
Чуптăвам.
Хӳхĕмлентĕр хĕл кунĕ хĕрӳ,
Çеçке çуртăр шалканă чĕрӳ.

ХУЛ ÇИНЕ ЛАРСАМ, ТЕКЕРЛĔК...

Текерлĕкĕ йĕрет-çке,
Савни аса килет-çке.

Халăх юрринчен

Шав куматăн пуçăм çиййĕн,
Вĕççĕр макăран.
Мĕншĕн эсĕ, кайăк тусăм,
Питĕ хурланан?
Хул çине ларсам, текерлĕк,
Эс уççам чунна.
Тен, шуйханнă пĕчĕк кайăк,
Пулăшăп сана...
Хамăн та паян чун вутлă,
Ян! каймасть тăмрам.
Çырă куçăм, ик çунатăм,
Йăл кулмасть çумра.
... Тек çаплах кумать текерлĕк,
Çук чĕлхи, чĕнмест.
Шав йĕрет, хӳхлет ӳпкевлĕн,
Ќанăçа пĕлмест.

САНА АСАТСАН...

Пуйăссем кăшкăраççĕ,
Пуйăссем макăраççĕ,
Пуйăссем каяççĕ уйрăлса.
Пуйăссем хурланаççĕ,
Пуйăссем тунсăхлаççĕ,
Пуйăссем килмеççĕ çаврăнса...
Юр ашса таврăнатăп,
Вут умне лăш ларатăп,
Тĕмсĕлетĕп каллех ќантăкран.
Çил улать кĕрт хывасшăн,
Çулсене йăлт хупласшăн...
Эс кĕрессĕн туйнать алăкран.

*

Тискер этем: «Савап», — тесен,
Шанаҫҫĕ хĕрлĕ чечексем,
Хăраҫҫĕ ешĕл куăксем,
Саркайăк юррине чарать.
Хура вара, салху тĕнче —
Чеченлĕх ҫук ун питĕнче

Маттур этем: «Савап», — тесен,
Ҫеҫке ҫураҫҫĕ чечексем,
Кашлаҫҫĕ ешĕл курăксем,
Саркайăк юрă шăрататать.
Епле хавас ун чух тĕнче —
Хĕвел ҫиҫет ун чунĕнче!

*

Шăнкăр! Шăнкăр!
Шăнкăр! Шăнкăрав.
Улăх ҫийĕн янкăс янăрав.
Ман чунра хускатрĕ иртнине,
Куç умне кăларчĕ савнине.

Шăнкăр! Шăнкăр!
Шăнкăр! Шăнкăрав.
Инҫетре ҫухалчĕ янăрав...
Ман чунра хускатрĕ иртнине,
Куç умне кăларчĕ туссене.

КУРЕ-ЧАЙ КĔВВИСЕМ

* * *

Надилé, Надилé,
Пач илменччĕ пиле

Сана эп курасса,
Ҫапла тӗл пуласса.
Ҫилсе тухрӑн епле
Паян эс ман тӗле?
Чечекрен те чечек,
Ирхи сар хӗвел пек.
Илтеп сан юррунта
Ҫӳре-чай * кӗввине,
Эп курап куҫунта
Чун-чӗрӳ ӑшшине.
... Хитре ҫумӑр ҫӑвать,
Хырсем ҫийӗн ташлать.
Туратран татӑлса,
Ҫут тумлам яр тумлать.
Ванать ҫак тумлам пек
Эс кайсассӑн чӗрем.
Куккук килмӗ ирпе,
Тӗксӗмленӗ илем...
Надиле́, Надиле́,
Пач илменччӗ пиле
Сана эп курасса,
Ҫапла тӗл пуласса...

* * *

Кӗр ҫитсессӗн, савӑк чунӑм,
Кӗлчечекӗм шанӗ те,
Нар ҫутиллӗ сарӑ кунӑм
Шӑнкӑр-шӑнкӑр анӗ те —
Савнӑ тусӑм, пюль-пюль кайӑк *,
Кайӑн эсӗ аякка.
Хӑр-пӗччен сар хырӑ майлӑ
Юлӑп эпӗ тӑлӑха.
Кун та иртӗ, ҫул та иртӗ
Килмӗҫ пирӗн ҫумӑрсем...

---

* Ҫӳре-чай (азербайджан.) — Кура шывӗ.

* Пюль-пюль кайӑк (азербайджан.) — шӑпчӑк кайӑк.

Пĕл, сана ун чух та кĕтĕ
Тунсăх куçлă пĕр этем.

САВНĂ ТУСĂМ, САВНĂ ПĂЧĂР

В. С.

Хĕл сиввийĕ кăчăр! кăчăр!
Ак пуçларĕ юрлама.
Ман çумра эс, савнă пăчăр,—
Çук, шăнтаймĕ шартлама.

Эс шăнсассăн — хĕмлентерĕп,
Шĕл-кăварлă ман чĕрем.
Сан чунна яр! çĕклентерĕп,
Чухăн мар эп кĕвĕрен.

Çич тĕспе çеçке çуртарăп
Шур юр витнĕ улăхра.
Ту-сăрта та ташлаттарăп
Саншăн эп çак вăхăтра.

Эс паян сирсе антартăн
Ман çири хĕн-асапа.
Чунăма эс юрлаттартăн,
Вутăш пултăн эс манпа...

Хĕл сиввийĕ кăчăр! кăчăр!
Тулнă уйăх шап-шурах.
Савнă тусăм, савнă пăчăр,
Эс утатăн ман çумрах.

СИЛПИ ЕНЧЕ ТУСЕМ ЕМ-ЕШĔЛ...

А. И.

* * *

Силпи енче тусем ем-ешĕл,
Силпи енче çăлсем хитре.

Хăçан тата санпа, çулташăм,
Кунта, эх, килĕпĕр тепре.

Хăçан тепре санпа, чиперĕм,
Татах эп татăп-ши çырла?..
Тайма пуçах хавал панишĕн
Чунри сăвва ларса çырма.

... Силпи енче шывсем сипетлĕ,
Силпи енче çĕршыв ĕлккен.
Çути сÿнми, асран кайми
Шăпам ман пултăн эс иккен.

* * *

Чул çинче сиксе,
Сивĕ çăл шаркать.
Çĕн тухъян çиçсе,
Ту айпе юхать.

Çул çинче, çут шыв,
Эсĕ ан пăтран.
Хĕр шăпи, кунта
Эсĕ ан аркан.

Сĕм-хура вăрман,
Кĕçĕр ан хумхан.
Сарă хĕр, Нарспи,
Эсĕ ан хурлан.

Тупăн эс, чĕкеç,
Савнă каччуна,
Пуçлĕ ак ыран
Ялйышу туйна.

... Çÿллĕ ту айпе
Шăнкăр çăл тапать,
Кĕмĕл пек çиçет,
Юрă пек юхать.

Çул çинче, çăл шыв,
Эсĕ ан пăтран.
Хĕр шăпи, кунта
Эсĕ ан аркан.

* * *

Мĕн чул кунта сенкер çăлсем,
Епле ĕлккен юрри вĕсен!
Ҫашни кунта — куç пек илем,
Ҫашни тăкать ахах-селем.
Пĕри вара, Вăтакасри,
Чи, чи вăйли, çутти, хитри.
Ҫĕçтук пӳлекĕ * теç ăна,
Чĕрем чĕнет унта мана...
... Поэт çуралнă кун, ирпе,
Çиçсе асамлăн хĕвелпе,
Тусем çине хĕлхем сапса,
Çăлкуç шар! тухнă, тет, тапса.
Ĕçчен çăлкуç! Вăл парăнман,
Ыйха кайса текех выртман.
Çĕнтернĕ вăл мăнттай тăва,
Шăтарнă çăл кăвак чула!
Çĕн çăл умне мерчен хума,
Шерпет шывне ĕçме, ăсма
Унта кĕç аннă, тет, хĕрсем,
Юрла-юрла — патвар яшсем.
Ҫĕсле ăсти, хирти ĕçчен,
Ҫĕтӳç — васканă ту çинчен.
Пурте пуç тайнă çăл шывне,
Мухтанă унăн техĕмне.
Çапла пуçланă çăл юхма,
Чăваш чунне хăват пама.

... Юхать çăлкуç паян хитре,
Сасси ун кайрĕ ĕмĕре.

---

* Ҫĕçтук пӳлекĕ — Ҫонстантин Иванов парни тени пулать.

Тӗнче килет халь ун патне
Сыпса пăхма тăп-тăр шывне.
Вăй-хал парать вăл сухаҫа,
Тусем касан хастар чулҫа.
Ăсчах ларать ҫăлкуҫ умне,
Туптать кунта вăл хăй ăсне.
Ҫăлкуҫ шăнмасть, ҫăлкуҫ типмест,
Таппийӗ унăн иксӗлмест.
Хăвачӗ ун — чăваш сăвви,
Чăваш поэзийӗн юрри.

* * *

Сыв пул, Слакпуҫ! Хуш пул *, Слакпуҫ—
Илем ҫӗршывӗ, ҫăлтăр куҫ!
Сунман кураҫҫăн эп ҫăлна,
Сунман ӗҫессӗн эп шывна.
Хăҫан ҫитем тата кунта,
Тухса ларам хушка сăрта?
Хăҫан сирте, Силпи, Чӳкай **,
Тӗрле-тӗрле тăвам сăрнай?
Хăҫан, поэт, тепре килсе:
— Сӗве енчи парне,— тесе,
Тăпру ҫине чечек хурам,
Кӳнми пуҫа тайса тăрам?..
Сыв пул, Слакпуҫ! Хуш пул, Слакпуҫ—
Нарспи ҫӗршывӗ, ҫӗмӗрт куҫ!

✻

В. С.

Тӗксӗм эп пурнаттăм,
Пит сахал кулаттăм,
Тем ялан кӗтеттӗм тилмӗрсе.
Йăл! сапса асамлă хевтине,
Сан ҫуту ак ӳкрӗ ман ҫине —

* Хуш пул (пушкăртла) — сыв пул.
** Силпи ҫумӗнчи сăрт айӗ, авал чӳк тунă вырăн.

Çăлтăр пек çуталтăм,
Уйăх пек шуралтăм,
Шăпчăк-чун çĕкленчĕ тӳпене.

Тĕссĕр эп курнаттăм,
Пит сайра юрлаттăм,
Çак куна кĕтеттĕм хĕмленсе.
Йăл! сапса асамлă ăшшине,
Сан çуту ак ӳкрĕ ман çине —
Çĕнĕрен çуралтăм,
Сывлăм пек тасалтăм,
Юррăм кар капланчĕ чĕрене.

*

Ялкăшатчĕç ун чух кăвар пек çăлтăрсем!
Ах, мĕн чул ăсатман эп сире, пуйăссем!
Халь, ак, çук, çӳремес пуйăссем ман тĕлтен.
Ăсатать вĕсене урăххи, яш этем...
... Пуйăссем, пуйăссем, илсе кайăр мана,
Пуйăссем, çăлтăрсем, хĕмлентерĕр чуна!

ÇАВ ЧĂНА ÇАПЛАХ ШАНМАСАР...

Чупрăм антăм шыв ăсмашкăн
Шур çамкаллă ту айне.
Килтĕн те аса — хурлантăм,
Тухрăн эсĕ шыв çине...

Шап-шурахчĕ кайăк хурĕ,
Шывсăр пулчĕ хуп-хурах.
Çил касатчĕ ик çунатăм,
Сансăр юлчĕ вăл хăрах.

Çук, килеймĕç, çук, юрлаймĕç
Иртсе кайнă кунăмсем.
Çав чăна çаплах шанмасăр
Тĕмсĕлеççĕ куçăмсем.

* * *

Шав сана курассăм ман килет,
Çумăнта пулассăм ман килет.
Çитмĕл çичĕ шурлăх—вĕçĕ çук,
Сан патна пымашкăн каçă çук...
Хуть пин çул пулсан та умăмра—
Ман сана манмашкăн халăм çук...

Сассуна илтессĕм ман килет,
Куçăнтан пăхассăм ман килет.
Çитмĕл çичĕ тинĕс — вĕçĕ çук,
Сан хӳттӳ пулмашкăн пиллĕх çук...
Пурпĕр эсĕ чĕртнĕ çулăма
Шыв сапмашкăн, тусăм, халăм çук...

КУÇ УМНЕ ТУХАЙРĔ ÇАК АСАИЛӲ...

* * *

Алтăр куçлă тăмана
Ух! Ух! терĕ, ӳхĕрсе.
Ыйхă пуснă вăрмана
Шарт! вăратрĕ, сиктерсе.

Шур мулкачĕ чăтлăхран
Сикрĕ тухрĕ, хăраса.
Сăрчĕ-варĕ те çаран —
Эп те вĕçрĕм яр! шуса...

Çук хыçра халь шкул çути,
Сăрт çине юлать вăрман.
Эп курап: ак ял кати,
Кăлтăр-кăлтăр çилармань...

Чун-чĕрем кăлт! кăлт! сикет,
Çитрĕм тейĕн эп вĕçсе.
Кил çути, ав, мĕлтлетет,
Куç пекех мана кĕтсе.

* * *

Ват Туйралăх хыçĕ... Қарăш авăтать.
Хĕм сапса кăвайтă çутă ывăтать.
Турă утăм ячĕ танлăн кĕçенсе,
Сар юпах ак иртрĕ çивчĕн вирхĕнсе.
Ӳхĕ ахăлтатрĕ хыр çине ларса,
Кĕç унтан çухалчĕ шур енне кайса...
Йăл! та йăл! сикеççĕ çутă çăлтăрсем,
Ял енче вĕреççĕ кӳнсĕр йытăсем.
Эп выртап, шак хытнă. Янкăр сĕм-çĕрле.
Эп халап итлетĕп тус-йышпа пĕрле...
Куç умне тухайрĕ çак асаилӳ —
Çĕрĕм-шывăм, сиплĕ чунăмри пилӳ.

ТУНСĂХЛАРĂМ ЭП ҚУ ЧУХ...

Ырă йăмăкăм, Личук,
Лар çумма килсе.
Тунсăхларăм эп ку чух
Эс тепле тесе...

Пӳрт ăшшилĕх, кăмака
Халь хутса эс яр.
Çурт илемĕ, хăтлăха,
Лартăр сăмавар.

Хур касса эс çăкăрна,
Пар кăштах тăвар.
Сарă питлĕ чăкăтна
Çурмалла тăвар...

Юрă эс унтан пуçла
Ман куçран пăхса.
Çамрăк ĕмĕр, çут куçла,
Тăтăр йăлт тухса.

*

Ват утсем сĕнксе тăраççĕ
Сар хĕвелĕн питĕнче.
Иртнĕ кун çулне йĕрлеççĕ,
Мĕн çук пулĕ иртнинче.

— Тусăмсем,— теп, ачашлатăп
Эпĕ ватă утсене.
Хам çаплах куçа шăлатăп
Уçнă май çилхисене.

Вут тăкса ун чух килетчĕ
Урнă фюрер, чĕр шуйттан,
Чăн салтак пекех каятчĕç
Лашасем вăрçа ялтан.

Тулхăратчĕç, кĕçенетчĕç
Ял енне пăха-пăха.
Пур ватти-хĕтти йĕретчĕ
Çул хĕрне туха-туха.

Ах, кусен вара тиветчĕ
Вунă утшăн ĕçлеме.
Хăш чухне тепри тӳнетчĕ,
Вăйĕ çукчĕ çĕкленме.

Хам çиес чĕлле эп панă
Çав чĕлхесĕр ыр чуна.
Çуммăн туртнă, ачашланă
Мĕн иртен яра куна.

Çын пекех-çке танлăн-сумлăн
Панă хал утсем пире.
Çав утсен ятне эп чыслăн
Палăк лартăттăм пĕрре.

УХĂ ЯТĂМ ХЫРЛĂХ ЛЕШ ЕННЕ...

(ШАМПАЙ АСАТТЕ ЮРРИСЕМ)

*

Тĕпчĕкри асаттем — Нухайран,
Пуçланать ман тымарăм унран.
...Чĕмпĕре вăл юрттарнă утсем,
Шăнкăравлă пасар кун çитсен.
Хаярак çав кĕтӳçĕн шăпи,
Лӳшкетет шав йĕпи те сапи.
Тулашать Суюмбай, ут хуçи,
Ќулленех эс, кĕтӳç, патак çи.
Тарса юлнă пĕрре çав нухай
Чăваша. Сисеймен Суюмбай!
...Ĕмĕрех пурнас çук кайăкла—
Ерипен вĕренет чăвашла.
Паллашать вăл кĕтӳçĕ хĕрпе,
Хура куçлă чипер Туйпипе.
Мăшăрланнă вара яш чунсем,
Пĕр-пĕрне юратан юрлăсем.
Ќаярах çуралать шăкăлчи —
Турхай ятлă вут куçлă ачи.
Аталаннă, çын пулнă Турхай,
Ăсталанă, янратнă сăрнай.
Пĕчĕкрен ут çилхи айĕнче,
Ачаран чăпăркка — аллинче.
Турхайран Шăмпай эпĕ пулап,
Нухайсен тăхăмне эп тăсап.

*

Çилçунатлă утсем, сар çуна —
Лар, савниçĕм, часрах ман çумма,
Ќăмăл-туйăм хавалллă чухне
Пĕр каяр-ха Хырла тăршшĕне.

Эп сана тăлăппа пиелем,
Ăмăрт пек ыталам та илем...
Хĕл сиввийĕ выляйтăр шăнтса,
Ҫичĕ ючĕ юлайтăр пăхса.

*

Шăн ҫурта пек чăрăш касрăм,
Сар хăма ҫурса эп татрăм.
Улт кĕсменлĕ кимĕ турăм,
Хăтлă пулчĕ урăм-сурăм.
Шăп варне сайхахлăх лартрăм,
Урлă ик кашта эп ҫапрăм.

Юр пек шурă ҫилкĕҫ картăм,
Атăл ҫилĕпе ваш! сартăм.
Анлă Атăл хумлă-шавлă,
Ман чуна ҫĕклет хаваллă.
Эй, кĕрлеччĕ харсăр тăвăл!
Пур паян ман шухă кăмăл.

*

Ҫеҫенхир куянне, ай, шуйхатрăм,
Хурчăка вĕҫтерсе, ай, ҫаклатрăм.
Чечек пек тăпăлкка сар хĕрне
Куҫăмпа пăхайса эп пăлхатрăм,
Малашне тĕл пулмашкăн тĕв татрăм.

Урхамах утăма, ай, юрттартăм,
Кăлкансен кăтрине, ай, пусартăм,
Тупăлха пек чипер сар хĕрне
Анкарти хыҫĕнче ыталарăм,
Кăвак ҫут киличчен ачашларăм.

*

Сухала-ха, лашам, сухала —
Талпӑнса хыт ҫӗре тӑрмала.
Акатуй, ак, пуҫланӗ ҫиҫсе,
Акапуҫӗ эп парӑп илсе:
Тыткӑҫи пулӗ ун пӑхӑртан,
Ун тӗренӗ — таса ылтӑнран.

Сухала-ха, лашам, сухала —
Талпӑнса хыт ҫӗре тӑрмала.
Кӗмӗлленӗ йӗвен пасарта —
Эрнекун пулӗ сан пуҫӑнта.
Пӑхӑртан пулӗҫ ун тӑхисем,
Ӗнчерен пулӗҫ ун тӗррисем.

Сухала-ха, лашам, сухала —
Талпӑнса хыт ҫӗре тӑрмала.
Ҫывхарсан кӗрхи шавлӑ уяв,
Илсе парӑп ян-ян шӑнкӑрав,
Янӑратӗ яла ун сасси,
Укаран пулӗ ун сар мӑйӑйи.

Сухала-ха, лашам, сухала —
Талпӑнса хыт ҫӗре тӑрмала...

*

Алла тытрӑм тӑмра калама,
Уҫас терӗм пӗрре чунӑма.
Хурлансан та—пӗр пурнӑҫ, иртет,
Ташласан та — ҫав пурнӑҫ, ҫитет.
Ҫӳреместӗп суя эп сутса,
Куҫҫуль евӗр ман чунӑм — таса.

ИКĔ МОНОЛОГ

* * *

— Çупаларăм *, ӳстертĕм тиха,
Çупаларăм, вылятрăм тиха.
Илтеймерĕм çапах ыррине,
Ķураймарăм çапах телейне.
Тухаймарĕ сӳсмен мăйăмран,
Хăпаймарĕ тăлли ураран.
Хыпкалантăм хĕлле лашманра,
Асаплантăм çулла сухара.
Шеллеместчĕ, куштанччĕ хуçа:
Çийĕмре ман пулман юпăнча,
Пач каймастчĕ патак аллинчен,
Пач тухмастчĕ хупах пуçĕнчен...
...Çупаларăм, ӳстертĕм тиха,
Çупаларăм, вылятрăм тиха.
Илтеймерĕм çапах ыррине,
Ķураймарăм çапах телейне...
Пĕр канмасăр эп туртрăм нуша,—
Тесе шав кулянать, тет, лаша.

* * *

— Урапа эп, хура урапа —
Ĕмĕре ирттереп хурлăхпа.
Миçе çын ăсатман салтака,
Миçе çын эп леçмен касмăка...
Ватăлап, чун туртать канăça,
Хăварас, теп, çавна манăça...
Анчах çук, вăл тухмасть асăмран:
Ķурăнаççĕ сăнсем тамăкран.
Тăсăлаççĕ унтан алăсем,
Макăраççĕ унта сар хĕрсем —
Хăрхăма хулăмла панисем.
Ķуçăма курăнаç йĕкĕтсем,
Çĕпĕре пуçиле янисем,

* Çупаларăм (авалхи сăмах) — ачашларăм, çупăрларăм. Лаша тихине çупалать.

Хура чун кĕмĕлле сутнисем.
Çавăнпа макăрать кустăрмам,
Çаксене эп ăçтан-ха манам?

*

Эй, ялти ырпиллĕ ватăсем,
Пуçăма ылхан ан витĕрсем!
Тус туса вăрларăм сар хĕре,
Тус туса эп илтĕм сар хĕре.
Унсăрăн сутатчĕç çич юта,
Макăртса чикетчĕç чĕр вута.
...Виçĕ çул эп саврăм сар хĕре,
Виçĕ çул чуптурăм сар хĕре.
Евчĕ ячĕ çич ют аякран,
Чунăм çукчĕ хурлăх курасран...

Эй, кăвак сухаллă ватăсем,
Ятлă-сумлă ырă ăсчахсем,
Пуçăма ан витĕр ылханпа,
Ятăма ан вăрçăр усалпа.
Тăпăрт! тăпăрт! çил пек урхамах,
Хырлăх витĕр вирхĕн хăвăртрах.

*

Ухă ятăм хырлăх леш енне,
Уххăм ӳкрĕ акăш хур умне...
Ашшĕ-амăш йĕрĕ куççульпе,
Пиллĕх парĕ пурпĕр пылĕпе.
Хăмăр хăнтăр çĕлĕк пуçăмра,
Шурă кайăк-тусăм çумăмра.
Йĕс тӳмеллĕ кĕрĕк çиййĕмре,
Чунăм савнă çыннăм — килĕмре.
— Кинĕм,— тейĕр, ăна юп курса:
— Сар инкем, парсамччĕ пуç сырса.

*

Пыллӑх тӑрӑх чупрӑм-чупрӑм —
Пӗр пӑлан паян эп тытрӑм.
Тирӗнчен такмак ӑсларӑм,
Хӗр пушмакӗ калӑпларӑм.
Тӳш-пӳшне ҫакса какларӑм,
Ӗилӗйыша лартса сӑйларӑм.
Сар пӑлан ӗрчех, ай, пытӑр,
Ал-урам та йӑрӑ пултӑр.

ЭХ, САР ҪУНА, САР ҪУНА...

Иртсе кайрӗ кӗр ҫиҫсе,
Ӗилсе тӑчӗ хӗл ҫитсе.
Эх, сар ҫуна, сар ҫуна,
Хитре тӑвар уявна!
Тухар, яшсем, ярӑнма,
Шап-шур юрпа савӑнма.
Вуник тӳшек, ҫич ҫитар,—
Хӑта, хӗрне качча пар!
Сиктертӗр вӑл ҫич сӑпка,
Ӳстертӗр вӑл ҫич папка.
Вӑрман тӑрри хумханать,
Леш кас пики мухтанать:
— Сурпан сарри сӑрмалла,
Тухъя тӗрри тумалла...—
Хӑй каччӑпа ярӑнать,
Хӑва пекех авӑнать.
Ах, чикӗнет, пӗкӗнет —
Ӗаччи ҫумне сӗрӗнет...
Эх, сар ҫуна, сар ҫуна,
Пикеҫ хӗре ларт ҫумма.
Савни пулсан — пур тивлет,
Чӗре ҫу пек ирӗлет.
Эх, сар ҫуна, сар ҫуна,
Хитре тӑвар уявна...

ХĂВАТЛĂ ВУТ, ТАСА ҪАВАР...

Ака-суха алран кайсан
Е шур юрсем-кĕртсем ларсан —
Яратăп эп лаҫа чĕртсе,
Амалăхне вĕртсе, хĕртсе.
Пĕлеп кăштах эп хĕм тытма —
Чӳлмек тума, хурҫа сыпма.
Юрла-юрла тĕрлеп кăмкан,
Утсем валли авап такан.
Илем тенин — ёҫре тĕвви,
Ламран-лама — юрри-кĕвви.

* * *

— Хăватлă вут, таса Ҫăвар,
Хĕрӳлĕхне пире эс пар?!
Ҫаксен ятне тĕсе кĕртсе,
Парсам пире, Ҫăвар, хĕртсе:
Тĕрен хурҫи — суха тума,
Ҫава хурҫи — ҫаран ҫулма,
Ҫурла хурҫи — тырпул вырма,
Ийе хурҫи — пура ырма,
Тăхҫа хурҫи — арман тăхма,
Хăрта хурҫи — вăрман хăртма,
Чӳккеҫ хурҫи — чул-ту ватма,
Пăлат хурҫи — шăрттан касма.
Хăватлă вут, таса Ҫăвар,
Хĕрӳлĕхне пире эс пар?!
Вучах куҫне ан пар сӳнме,
Парсам пире тимне-хĕмне.

* * *

— Хăватлă вут, таса Ҫăвар,
Хĕрӳлĕхне пире эс пар?!
Сĕт-ҫу тытас чӳлмекĕмсем,
Симпыл ярас ҫăрхатăмсем,
Тăвар килли, аш-пăш тирки,
Уйран сапи, сăра курки,
Ача-пăча шăхличĕсем,

Çăл шыв ăсас кăмканăмсем
Илемлĕ пулччăр пиçĕнсе,
Янравлă пулччăр хĕртĕнсе.
Тимлетĕр сумлăн çӳрекен,
Мухтатăр сутăн илекен.
Хăватлă вут, таса Кăвар,
Илемлĕхне пире эс пар?!
Ыйтап санран хĕрӳлĕхне,
Парсам пире ун ырлăхне.

*

И эпирччĕ, эпирччĕ —
Ик хĕл каçнă пăланччĕ,
Атте-аннен ыр ятне
Нихçан ниçта яманччĕ.
И эпирччĕ, эпирччĕ —
Çӳлте вĕçен хăлатчĕ.
Тăвансенĕн ыр ятне
Нихçан ниçта яманччĕ.
И эпирччĕ, эпирччĕ —
Кашкăр тытан йĕкĕтчĕ,
Çинçе пилĕк хĕрсемпе
Вылямасăр ӳсменччĕ.

*

Пирĕн атте пĕрхĕт аçи —
— Кăринк! — тетчĕ, йыхăратчĕ,
Çĕр пуççипех * пуçтаратчĕ,
Çуначĕпе ăшăтатчĕ.
Пирĕн анне пĕрхĕт ами —
— Кăринк! — тетчĕ, шуйханатчĕ,
Çĕр пуççипех пуçтаратчĕ,
Çуначĕпе ăшăтатчĕ.
Аттен сассийĕ ĕнтĕ çук,

* Çĕр пуççипе — пĕтĕм йăха-несĕле (çĕр пуç таран) пуçтаратчĕ тени пулать.

— Кăринк! — тени илтĕнмест.
Çĕр пуççипе йыш пуçтарма
Çунат сарса çӳреймест.
Аннен сассийĕ ĕнтĕ çук,
— Кăринк! — тени илтĕнмест.
Çĕр пуççипе йыш пуçтарма
Çунатне ваш! çĕклеймест.

ИСКЕЙ ПАЙТУЛӖ

ПОЭМА

УМӖНХИ САМАХ

Улхаш енче хӗрсе ҫӳретӗп,
Сӗме сирмен-ха ҫутӑ ир.
Чӑваш ҫулне пуҫра тӗрлетӗп,
Ҫаҫап утса хир хыҫҫӑн хир.

... Ума тухать ҫиҫсе, шап-шуррӑн
Пайтулӑн учӗ кӗҫенсе.
Вӗҫет, вӗҫет Хӑлат сатуррӑн,
Юлать чул-шакӑ тӗпренсе.

Таҫта кӗрлет йыхравлӑ сасӑ,
Туяп — чӗнет пек утаман.
Хусах иртет пек касӑ, касӑ —
Тарать лере хаяр тӑшман...

Кӗҫех ҫап-ҫут килсе тухаҫҫӗ
Аксу та Чакӑ, Тимӗрҫен...
Ватсем мана ҫапла калаҫҫӗ:
Авал ку пулнӑ Тиккиъен *.

Сӑртри ката, ӗшне, вӑрманӗ
Ҫунта упрать Пайтул ятне.
Хастар чӑваш ӑна-и манӗ?!
Ҫашни чунрах курап сӑнне.

Ҫӗрпӳ енче те, ав, сӑваплӑн
Ӑса илет ӑна Ҫавал.
Валаклӑ ҫӑлӗ те хӑватлӑн
Тапать — пире парса хавал.

* Тиккиъен (Дикое поле сӑмахран) — Сӑр вӑрманӗпе Чӗмпӗр хушшинчи анлӑ ҫеҫенхире авал ҫапла каланӑ.

Ҫунта вăл, паттăр ҫын, ҫуралнă,
Ҫунта вăл курнă кун ҫути.
Вĕри чĕри хĕнпе шуралнă,
Чунне ун каснă терт тути.

Мерчен ятне те, ҫук, манмаҫҫĕ,
Ҫӳрет хитре сăвви-юрри.
Хĕрсем качча сăмах памаҫҫĕ,
Туман пулсан «Мерчен тĕрри»...

Утап, утап — утса тухаслăн,
Илемлĕ хирĕн вĕҫĕ ҫук.
Часах ак кĕрлĕ вăл мăнаҫлăн
Мулне ĕҫченĕ пухнă чух.

Ҫĕнни кунта ĕлккен ҫĕкленнĕ —
Тивлетлĕ ырă самана!
Ăна ҫулпуҫ Ильич пилленĕ,
Чăвашăм, халăхăм, сана!

... Ҫаллех илтетĕп акă юрă —
Ҫĕвви-ҫемми чуна касать:
— Патша ҫынни — тӳре те турă,
Пире ҫакать, тăвар сапать...

ХӲТЛĔХ ХӲМИНЕ ТĂВАҪАНСЕН ЮРРИ

1647—1658 ҫулсенче Вырăс патшалăхĕ хăйĕн кăнтăр енчи чиккине ҫирĕплетес тĕлĕшпе, Теччĕпе Сăр хушшинчи хӳтлĕх хӳмине (вала), унтан каярахпа Чĕмпĕрпе Ҫарсун, Саран хулисен хушшинчи хӳтлĕх хӳмисене купалаттарнă. Ҫав калама та ҫук тертлĕ ĕҫре, ытти халăхсен ҫыннисемпе пĕрле, ирĕксĕрлесе янă чăвашсем те нумаййăн асапланнă. Вĕсен хушшинче Ҫĕрпӳ уесĕнчи Хуракас ялĕнче ҫуралса ӳснĕ Искей Пайтулĕ те пулнă.

* * *

Сăвайне, ах, ҫапатпăр,
Тăприне купалатпăр,
Тĕрекне хăпартатпăр —
Тӳресен йыттисем пач каймаҫҫĕ умран,

Сутниксенӗн алли татӑлмасть патакран...
Чӗлӗмне туртмасассӑн,
Халапне ямасассӑн,
Чун-чӗре сӗврӗлмест пӗлӗт пек шухӑшран.

Тусене, ах, вататпӑр,
Вӑрманне турттаратпӑр,
Ҫӗперсем ӑсталатпӑр —
Тӑрӑнса ӳкиччен ӗҫ каймасть алӑран,
Тиексенӗн ҫынни пушанмасть пушӑран...
Тӑмрине тытмасассӑн,
Юррине тӑсмасассӑн,
Мӗнлерех лӑпланас-ха, тӑван, хуйхӑран.

АХ, ТӖНЧЕ МӖН-МА ПИТ ТАВЛӐ?..

(Пайтул монологӗсем)

1665 ҫул. Июнь уйӑхӗ.
Хӳтлӗх валӗсем тӑрӑхӗнче асапланса пурӑнакан хресченсем, патша ҫыннисен пусмӑрне чӑтаймасӑр, пӑлхава хатӗрленеҫҫӗ. Анчах хресченсен ҫӗкленӗвӗ, сутӑнчӑксене пула, путланса ларать. Хура халӑхӑн тулса ҫитнӗ ҫилли вӗресе, кӗрлесе каяймасть. Халӑха кӗрешӗве чӗнекен паттӑрсене касаматсене хупа-хупа лартаҫҫӗ. Ҫапах та вӗсенчен хӑшпӗрисем, Искей Пайтулӗ ертсе пынипе, тарса хӑтӑлаҫҫӗ. Атӑл ҫинче бурлаксем хушшинче пытанса пурӑнма тытӑнаҫҫӗ.

* * *

Чун шанни те — чурӑс чунлӑ,
Ал пани те — хура юнлӑ.
Тӳрӗ пултӑм — кураймарӗҫ,
Хӑр-суян пуҫа варларӗҫ.
Мӗскӗн пултӑм—пач картмарӗҫ,
Ҫын тесе сума сумарӗҫ.
Ҫӑтӑх чун — тӗнче синкекӗ,
Ҫӗвӗҫ чун — тӗнче инкекӗ.

Йыттăм çеç мана сутмарĕ,
Юррăм çеç мана суймарĕ.
Йыттăм чунлă — калаçаттăм,
Пĕр юрлаттăм — лăпланаттăм.
Пур ырра турханĕ çирĕ,
Халь ăçта тус-йышлă ирĕм?..
Ах, тĕнче мĕн-ма пит тавлă,
Ӑукăр-макăр та ултавлă?..

* * *

Эх, сăрнайăм, ах, сăрнайăм,
Сарă уртăшăм, тускайăм,
Ман чуна эс çеç уçатăн,
Çын пекех хавал паратăн.

... Пурччĕ тусăм ман, телейĕм,
Тӳрĕ чунлă Тимĕрккейĕм.
Çын çинче ăспа çиçетчĕ,
Хĕç тытма пире чĕнетчĕ.

Сутăх чун ăна пĕтерчĕ —
Ӑасмăк пулчĕ унăн терчĕ...
Ах, тур-тур, патши çăтахлă,
Ун çынни епле мăнаçлă.

Мул тĕнчин çук çав этепĕ,
Мул тĕнчин çук çав нисепĕ.
Çĕр питне пĕрре çăвасчĕ,
Пур лĕкке шăлса тăкасчĕ!..

... Эх, сăрнайăм, ах, сăрнайăм,
Сарă уртăшăм, тускайăм,
Ман чуна эс çеç уçатăн,
Çын пекех хавал паратăн.

ТӐСЕÇÇӖ-ХА ҪАҪАНСЕМ

1668 çул. Виççӗмӗш çул ӗнтӗ Искей Пайтулӗ Атӑл тӑрӑх урӑх ятпа бурлакра çӳрет, тертленет. Çеçенхираррипе Сӑр вӑрманӗ еннелле илемлӗн юхса выртакан Юхлӑ шывӗ хӗрринчи ялта унӑн Мерчен ятлӑ мӑшӑрӗпе ачисем пурӑнаççӗ.

Ах, теетпӗр утӑм шутласа...
(Бурлаксен юррисем)

Анлӑ Атӑл шывӗ хӗррине,
Шурӑ Чӗмпӗр тӑвӗн аркине,
Виçӗ сутӑç ларнӑ сут тума,
Виçӗ сутӑç ларнӑ мул сума —
Пинӗн-пинӗн ылтӑн сумлама,
Пӑтӑн-пӑтӑн кӗмӗл шутлама.
Эх, теетпӗр эпӗр ахлатса,
Ах, теетпӗр утӑм шутласа,
Мул хуçишӗн чуна хӗнесе,
Мул хуçишӗн парша сӗтӗрсе.

Анлӑ Атӑл шывӗн хӗррине,
Шурӑ Чӗмпӗр тӑвӗн тӑррине,
Çич стрилукӗ тухнӑ сӑнама,
Çич стрилукӗ тухнӑ юнама.
Тус-юлташӑм, пире туллама,
Тус-тӑванӑм, пире тӑллама...
Эх, теетпӗр эпӗр ахлатса,
Ах, теетпӗр утӑм шутласа,
Мул хуçишӗн чуна хӗнесе,
Мул хуçишӗн парша сӗтӗрсе.

* * *

Сӑра-эрех савтарать,
Чуна уçать, култарать,
Алла кӗсле тыттарать,
Ура хуçса таптарать.
Ларар пӗрре, йӗкӗтсем,
Тулли паян енчӗксем!

Хупах хуçи вашават,
Эрех пама тарават.
Ĕçер-и те юрлар-и,
Хуйха-суйха манар-и!
Йĕрки çук хальхи тĕнчен,
Пăхсан та хуть хăш енчен.
Хĕсĕрлет купса, паяр,
Йыт пекех патши хаяр...
Ан хуйхăрăр, чăвашсем,
Тӳсеççĕ-ха каçансем...
Купса — тавар турттарать,
Хупах — йĕме суттарать...
Каçан тӳсли * татăлсан,
Вĕçне çитсен, тăвăлсан,
Каяр элем вĕçтерме —
Улпутсене силлеме!

МАН ПУЛАСЧĔ ÇУМĂНТА

(Пайтул юрри)

Эх, Мерченĕм, эх Мерчен,
Тӳсĕм çитĕ хăçанччен?
Çакă-шим пире пӳрни,
Çак тĕнче пилпе пани?..
Аякра эп тилмĕреп,
Хăмăш евĕр типшĕреп.
Хĕн кышлать ман яш чуна,
Чĕн тӳсли касать ăна.
Куç илми Тикки енне
Эп пăхатăп хăш чухне.
Эс ăçта-ши, ах, ăçта?..
Хурлăх пуль сан чунунта,
Хуйхă пуль сан пуçунта,
Тунсăх пуль сан куçунта,

* Тӳсли — бурлаксем кимĕ туртнă чухне кăкăрпа хулпуççи çине тăхăнмалли хулăн япала.

Уй çути пек, саманта
Ман пуласчĕ çумăнта.
Пĕчĕк, пĕчĕк ылăма,
Чĕвĕл хĕрĕм-чунăма
Ман курасчĕ-çке пĕрре,
Кăшт пуласчĕ ман пĕрле...

Çич ют çывăх — эс инçе,
Çич ют хытă — чун çемçе...

ШУРĂ ЮПАНЧАЛЛĂ САР АЧИ...

1670 çул. Август уйăхĕ.
Степан Разин çарĕ Сарту хулине илет, Чĕмпĕр çине çĕкленсе тухать. Паттăр утаманăн çарĕнче чăвашсем те йышлă. Вĕсене Искей Пайтулĕ ертсе пырать. Ун йыхравçисем кĕçех Сăрпа Пăла, Çавал тăрăхне вирхĕнсе çитеççĕ, асапра-тертре нушаланакан халăха кĕрешĕве çĕклеççĕ.

* * *

Кам чура пулсах пурнасшăн,
Кам мула тек пуççапасшăн,
Кам ултавçă, кам юравçă,
Кам мулкач пекех хăравçă —
Вырттăр хăй матки çумне,
Кайтăр çав улпут патне!
Ŷт-пӳне улпут кастартăр,
Хырçă-марçă шав хыртартăр,
Çурăмне тăвар саптартăр!

Кам улпут пуçне касасшăн,
Кам ăна халь тĕп тăвасшăн,
Кам пупа тытса çакасшăн,
Ирĕк пурнăç кăшт курасшăн—
Ярт çĕклетĕр хăй пуçне,
Тухтăр çав йăх-ях çине!
Тимĕр сăнă вăл туптатăр,

Тӳч-чукмар тытса хӑртатӑр,
Хӗн-асап ҫуртне тустартӑр!

* * *

Турӑ утлӑ йӗкӗт — сар ачи,
Атӑл тӑрӑх кайрӗ ун сасси,
Хирӗн-хирӗн вӗҫрӗ ун юрри:
— Чухӑн! Тек ан пул патша хурри!
Тӑр, сиретпӗр ҫакӑ шырлӑха! —
Терӗ вӑл терт хуҫнӑ халӑха.

Шурӑ юпӑнчаллӑ сар ачи,
Атӑл тӑрӑх кайрӗ ун сасси.
Чан пулса янрарӗ хав-йыхрав,
Шӗл-кӑваррӑн хыпрӗ вирт-пӑлхав!..
Ялӑн-ялӑн тӑвӑл халь ҫӳрет,
Мул йӑхне хаяррӑн вӑл хирет.

ҪУҪ, АН ӲКӖН,
ЧӐРСӐР ПУҪӐМ...

Атӑл тӑрӑх кимӗ, кимӗ —
Ҫар тапраннӑ тӑвалла.
Вутлӑ ту пек халӑх ҫилӗ
Тапнӑ тухнӑ тулалла.

Халь ӑна улпут чараймӗ
Тимӗр вӗҫлӗ пушӑпа.
Хӑр-харах ҫакса хураймӗ
Вӗчӗ тулнӑ улӑпа.

... Чи малта—ҫунат сараслӑн —
Шур сӑхманлӑ утаман.
Ик ҫыран кӗрлет хаваслӑн,
Ян! каять уй-хир, вӑрман.

Ту енне Ҫтаппан тинкернӗ,
Вӗҫсӗр шухӑш пуҫӗнче.

Ун кимми шава ёнернӗ,
Çул хывать хумсем çинче.

— Эх, хастарлă шухă пуçăм,
Çăмăл мар сан кунçулу!
Мĕн тăван эс, чăрсăр пуçăм,
Ма эс йăтрăн хĕç, çулу?!

Ма эс ятăн теветкеллĕн
Вут-кăвар чĕрте-чĕрте?
Халь епле йĕркеллĕн, меллĕн
Эсĕ тытăн çав вирте?

Çук, ан ÿкĕн, паттăр чунăм,
Кăлăх мар ку талхăру!
Эс тахçан кĕтеттĕн çулăм,
Халăх — вутлă тавăру.

Çил тулашрĕ, çил кашларĕ —
Атăл тухрĕ çырантан.
Тăвăл! Тăвăл ак уларĕ —
Хĕм сапса таçтан-таçтан.

Тăк-тăмаллăн хускалмарăм,
Хĕç тытмарăм çаратма.
Сĕм каçра хăрта хăйрарăм —
Сан вăйна, çук çын, йăтма.

Халăх! Халăх! Эп куратăп:
Кĕлмĕç мар эс! Эс — тÿре!
Сан хална туйса калатăп:
Ан шиклен, патвар çÿре!

... Эх, хастарлă шухă пуçăм,
Çăмăл мар сан кунçулу!..
Çук, ан ÿкĕн, чăрсăр пуçăм,
Тĕрĕс тытрăн хĕç, çулу!..

*

Кăвайт тавра лараççĕ хусахсем,
Вутпа çиçсе выляççĕ хĕçĕсем,

Инçе-инçе пăхаççĕ куçĕсем,
Таçта вĕçсе çӳреççĕ шучĕсем.
— Ай-хай, сатур хусахсем,
Ăçта сирĕн килĕрсем,
Ăçта сирĕн килĕрсем?
— Хура вăрман варринче,
Пăлан кӳлли хĕрринче.

Кăвайт тавра лараççĕ хусахсем,
Вутпа çиçсе выляççĕ сăннисем.
Инçе-инçе пăхаççĕ куçĕсем,
Таçта вĕçсе çитеççĕ шучĕсем.
— Ай-хай, матур йĕкĕтсем,
Ăçта сирĕн савнисем,
Ăçта сирĕн савнисем?
— Упакасси варĕнче,
Вăрманкасси ялĕнче.

...Кăвайт тавра лараççĕ хусахсем,
Инçе-инçе пăхаççĕ куçĕсем,
Шаланкă пек вĕçеççĕ шучĕсем.

ЧĂВАШ ÇЫННИ, АН ПАР СĂРНА!

Пайтулăн Хăлачĕ сакăллă,
Чуппийĕ ун шыв пек юхăмлă,
Çамкийĕ ун кăвак çăлтăрлă,
Йĕнерĕ те çемçе сахъянлă,
Çап-çутă кĕмĕл йăраналлă,
Йĕсрен тунă çавра тăхаллă.

Вăта Тимĕрçенсен авалхи юрринчен.

Кĕрлет Сарту, шавлать Самар,—
Унта паяр халь хуçа мар!
Илетпĕр шурă Чĕмпĕре,
Патша çынни, эс чĕтĕре!
Чăваш çынни, ан пар сăрна,
Кăтарт тепре паян вăйна!

Куран, чупать ав, вăйпутти *—
Юхасшăн, аскăн, кĕрт йытти!
Ярса ăна тыт, халăх, çак —
Пĕр утăм каялла ан чак!..
Мăрса тарать, ав, йĕм хывсах,
Çаклат ăна çитсе, хусах!
Тараççĕ, ирсĕр сĕлĕхсем,
Тӳшек çинчи харам пырсем!
Малтан мала! Малтан мала!
Ан чак эс, халăх каялла!
Умра пырать Раçын Çтаппан,
Эпир унпа хальччен чакман.
— Сарынь на кичку**! — илтĕнет,
Пире хастар пулма чĕнет.
Хăпар, хусах, хӳме çине,
Кисрет эсрелĕн никĕсне! —
Чăваш, тутар, мăкши, ирçе —
Хула хӳтне ишеç хирсе.
Хуран пекех хула вĕрет,
Пин-пин чура унта кĕрет.
— Тус-йышăм! Эй, аркат, силле,
Улпут мурне эс ан шелле!
Чул хӳмене халь илмелле,
Сăпса йăви сан ишмелле!

ҪАВАҪ ХАЛАТ ПУЛАЙСАН...

1670 çул. Ноябрь уйăхĕ.
Вăйлă хĕçпăшалланнă патша çарĕсем Степан Разин çарне Чĕмпĕр патĕнче çĕнтернĕ хыççăн, пăлхавçăсен кĕрешĕвĕ питĕ те йывăрланса çитет, анчах вĕсем пурпĕр хĕçпăшалĕсене алăран пăрахмаççĕ. Аманса-тусăнса пĕтнĕ Искей Пайтулĕн çарĕ Çавал тăрăхне килсе тухать...

---

* Вăйпутти — воевода.
** С. Разинăн хăй çыннисене çапăçăва кĕме, паттăр пулма чĕнекен сăмахĕ.

* * *

Кĕрхи çулсем хуп-хура,
Утсем епле юртать-ши?
Паяр килет пит кăра,
Хусах епле чăтать-ши?

Хусах утне вылятать,
Çап-çут сăнни аллинче.
Савниййĕ, пур, хурланать,
Йĕрет ката хĕрринче...

Ай-хай сатур хусахин
Ури улпут тăллинче.
Ай-хай маттур йĕкĕчин
Шăпи тӳре аллинче.

Енчен çунат хушайсан,
Кăвак хăлат пулайсан —
Вăл кайĕччĕ çĕкленсе,
Хĕçне тытса, вирхĕнсе.

ЭС АÇТА-ШИ ХАЛЬ, ПАЙТУЛАМ?..

(Мерчен хӳхлевĕ)

— Юхлă шывĕ, Юхлă шывĕ,
Çаврăнсам Çавал енне.
Сăр вăрманĕн харсăр шавĕ,
Эс çĕкле Пайтул чунне!..

Тытрĕç те мана тăлларĕç
Икĕпитлĕ куштансем —
Кашкăрсем пекех тулларĕç,
Шутлă ĕнтĕ кунăмсем...

Ыр пулса пире çыхасшăн
Хыпкăнланчĕ Ситулла —

Чаплă ят та мул пухасшăн
Çын сутса вăл çĕр сумла.

Леш Кĕркке улпут пуласшăн,
Мĕн тумасть тата юхха?..
Çын çакать ялан, юрасшăн,
Çăткăн чунлă ват çăхха...

Касмăкра эпир ларатпăр,
Çич хуралçă умĕнче.
Тем тери асап куратпăр
Çичĕ ютăн аллинче.

Эс ăçта-ши халь, Пайтулăм,
Чуптăвасчĕ сан куçна...
Ман ăшра çунать вут-çулăм—
Тен, эс хунă хăв пуçна?

Тен, эс халь те вирхĕнетĕн,
Пур çăхан йышне сирсе?
Кар тăма каллех чĕнетĕн
Чухăна, вут пек хĕрсе?..

Çуммăн-юммăн пулаймарăм
Çак кĕрлевлĕ вăхăтра.
Ик çунат эп параймарăм,
Пуçăм пĕтĕ тамăкра...

Çут тĕнче сана вăй патăр
Çак хĕрÿллĕ кунсенче.
Юрлă çын сана тăнлатăр—
Вут хĕмлентĕр чĕринче.

Тыт хĕçне ялан хастаррăн —
Тавăр! Тавăр эсреле!
Эпĕ те чунпа патваррăн
Çумăнта çÿреп пĕрле.

... Юхлă шывĕ, Юхлă шывĕ,
Çаврăнсам Çавал енне.

Сăр вăрманĕн харсăр шавĕ,
Эс çĕкле Пайтул чунне!..

ПĂЛХАВЛĂ ЮРРĂМ МАНĂН ЮЛЧĔ...

1670—1671 çç. Декабрь-январь уйăхĕсем. Вутлă ту пек вĕресе тăракан Çавал тăрăхне патша правительстви Кăрмăш, Етĕрне, Шупашкар, Хусан, Чĕмпĕр хулисенчен карательсен çарĕсене ярать. Пуçкасансен çарĕ, пăлхавçăсене хĕснĕçемĕн хĕссе, хупăрласа илет. Пăлхавлă чăваш ялĕсене кĕл айне тума тытăнать. Çак сапăçусем вăхăтĕнче Искей Пайтулĕн çыннисем нумайăшĕ тыткăна çакланаççĕ. Пăлхавçăсен вăйĕ чакса пырать. 1671 çулхи январĕн 3-мĕшĕнче йывăр аманнă Искей Пайтулĕ те карательсен аллине лекет. Ăна тĕрмене хупса асаплантарма тытăнаççĕ.

* * *

Хастар çилсем, кăра çилсем!
Ăçта кăна çитместĕр-ши,
Ăçта кăна пулмастăр-ши?!
Вылятăр çӳл тусем çинче,
Вĕçетĕр уйăх патĕнче.
Хумпа çапатăр тинĕсе,
Улатăр çиçĕм пек çиçсе.
Çилсем, çилсем, вĕçесчĕ ман пĕрле —
Хĕçе тытса çӳресчĕ ирĕкре,
Чура вăйне çĕклесчĕ ман тепре!..
Эсир халь ак — йĕретĕр,
Тĕрме çинче ӳлетĕр,
Чуна вутпа хĕртетĕр.

Хастар çилсем, кăра çилсем!
Ăçта кăна çитместĕр-ши,
Ăçта кăна пулмастăр-ши?!
Чупатăр Атăл шыв çинче,
Кашлатăр Сăр вăрман енче.
Çĕклетĕр тăвăл, вирт ярса,
Чула ватса та тулхăрса...
Çилсем, çилсем, пырасчĕ ман пĕрле —

Таса вут пек çӳресчĕ ирĕкре,
Патша çуртне силлесчĕ ман тепре!..
Эсир халь ак — йĕретĕр,
Мерчен пекех хӳхлетĕр,
Чуна-юна вистетĕр.

ÇАПЛА ЯВАПАМ МАН СИРЕ, ТӲРЕ...

1671 ç., январь уйăхĕ

Матвей Ҫравков каратель:

— Ҫала пире, хурах,
Ҫала, хурах Пайтул!
Миçе улпут эс çакрăн ял çине,
Миçе пупа эс кĕртрĕн çĕн тĕне?

Искей Пайтулĕ:

— Эп мар кунта хурах —
Эсир, хура чунсем,
Тискер вĕшле йытсем!..
Шутлатăр шур патша — улпут йышне,
Сумлатăр шур çăхан — пупсен пуçне.

Матвей Ҫравков каратель:

Ҫала пире, хурах,
Ҫала, хурах Пайтул!
Мĕнле пурнас теетĕн хăтăлсан,
Патши хăвна ыр пиллĕн kaçарсан?

Искей Пайтулĕ:

— Ҫаллех эп тытăп хĕç!
Тус-йыш татах пухса,
Таса вăрçа тухса —
Патша пуçне тĕп тăвăп чи малтан,

Пуян йӑхне тустарӑп эп унтан!
Ҫапла явапӑм ман сире, тӳре,
Ҫавна кӗтет вутла ҫунан чӗре.

ИСКЕЙ ПАЙТУЛӖН ЮЛАШКИ САМАХӖ

— Хӗвел тухсан мана ҫакаҫҫӗ,
Паяр тӑвать хура такан.
Пире ҫапла хӑртма шутлаҫҫӗ,
Анчах, пӑлхавҫӑ, ан лӑплан!

Патша ҫине карах ҫӗкленчӗ
Тутарӗ, вырӑсӗ — чура.
Пӗрле чӑваш ҫынни хускалчӗ,
Ҫӗрлерӗ ун ҫилли кӑра.

Турхан-мӑрса йӑхне кӑкларӑм,
Парасшӑн ирӗк халӑха.
Ҫтаппан туспа ҫунса шутларӑм
Сиресшӗн йывӑр хурлӑха.

Ҫук ҫын — чӑваш! Сана картмаҫҫӗ,
Уйла пӗлен этем тесе.
Чуну ҫине кулса сураҫҫӗ,
Ятсем параҫҫӗ виртлесе.

Шыва сана хуса кӗртесшӗн
Мелке ҫилхеллӗ леш пупсем.
Хӗрес тытса чап-мул илесшӗн
Ялти тиек те пуянсем.

Вӗсем паян чӗрсе туртасшӑн
Чӑваш ятне ҫак ҫӗр ҫинчен.
Ӗнсӳ ҫине чиркӳ лартасшӑн,
Пӑвса илесшӗн пур енчен.

Сана пуян — тӗнче тискерӗ —
Сутать выҫкайлӑ улпута...

Ӗ̈текех вара чӗрем тӳсмерӗ —
Алла эп тытрӑм айпӑлта.

Анчах сахал ҫав эпӗ турӑм,
Вӑй-хал ҫитмерӗ пулмалла...
Ӑҫта эс халь, Ҫтаппанӑм, тусӑм,
Тен, эс вӗҫен-ха хӑлатла?!

Сыв пул, ҫӗршывӑм, эс — чӑвашӑм,
Хускатрӑм эп вутла чунна!
Чура ан пул текех йӑвашшӑн,
Эс те этем, ҫӗкле пуҫна!

Мана ҫаксан тепри ак килӗ —
Нумай пирте вӗри чунсем.
Ҫӑвар сапса, пӑлхавӑр ҫилӗ
Татах капланӗ, шар! ҫиҫсе.

Пӑлхавлӑ юррӑм манӑн юлчӗ,
Юратнӑ халӑхӑм, санра.
Ӑна, тӑван, час-час асилччӗ,
Юрла ӑна хатар кунра.

Сана вӑл тӑвӑл пек хускаттӑр,
Сӳнме ан патӑр кӑварна!
Чунна-юнна татах тапраттӑр,
Хӗҫне тыттартӑр аллуна!

ТУПМАЛЛИ

ÇĂЛКУÇĂМ, СĂПКĂМ...

Юрлам сан ятна... 3
Шур çамкаллă урхамахăм . . . —
«Çуркунне, ман ачаш ачам пек...» . 4
Улăхсем чечекре . . . . . . —
«1948 ç. Курни эс ĕçлесе...» . . 5
«1949 ç. Сиксе вылян кăвайт пек хыпрăм-çунтăм...» 6
Çунат сана эп парăп . . . . —
Сар хĕвел пек çĕнĕ çăкăр . . . 7
1950 ç. Эп анне пилне манман... . 8
«1955 ç. Кĕрлерĕ кĕр! Хура Ката...» . 9
Ларатăп та шур чул çине... . . 10
«Килтен ялйыш çине тухсан...» . . 11
«Мухтав термен кĕртен Çутта!..» . 12
«Ешĕл пыллăх хĕрринче...» . . . . —
«1975 ç. Тухъя хитре — ахах куçпа...» 13
Эп илтеп сассăра... . . . . . —
Эп утатăп хирпе пĕр-пĕччен... . 14
Выртать вăл вăрçă хирĕнче... . 15
Икшер йĕркен 16
«Пĕрре çынсем Суя чуна тытса...» . 18
«Эп сан пек этемех çĕр çинче...» . . —
Тăватшар йĕркен 19
«Аякка, аякка эп каяп ялăмран...» . 20
«Кала мана, пуçăм...» . . . . . —
«Эй, ачалăхăм, çивчĕ урхамахăм...» —
«Ача чухне эп тĕлленеттĕм...» . . 21
«Паян эп çăлкуçĕ тасатрăм...» . . —
Астасен юррисем
«Кăлтăрт! кăлтăрт! çăм тапса...» . 22
«Юрла-юрла калай касап...» . . —
«Хура сухал, хайман тытти...» . 23
Ырри çĕклентĕр—ырăпа
«Пайтах чипер йăла-йĕрке...» . 24
Ӳссем эс Улăп пек патвар . . —
Ĕçне эс ту юрла-юрла . . . 25
Ачашлăр сар хĕвелĕ вăй паран çĕре 26
Ырри килсен — хăна тăвар... . —

ХУЛ ÇИНЕ ЛАРСЕМ. ТЕКЕРЛĔК...
«Сарă йĕкĕт ут çулать, ай та вай...» 28
«Касри хĕрсем мунча кĕреççĕ...» . —
«Хĕрсем ирех тăраççĕ...» . . 29
«Хурасан, Хурасан, чечек пек яту сан...» . . . . —
Ячĕ ун Лейла 30
«Тинкешсенĕн чипер хĕрĕсем...» . —
«Эс, асамçă, мана тĕл пулсан...» . 31
Савнăран эп килтĕм савăнса... . —
«Йĕкĕтсем, кимĕçсем! Каçарсамăр мана...» 32
«Лар, çунатăм, çумма...» . . —
Хул çине ларсам, текерлĕк... 33
Сана ăсатсан... . . . . —
«Тискер этем: «Савап»,— тесен...» 34
«Шăнкăр! Шăнкăр!..» . . . —
Кÿре-чай кĕввисем
«Надиле́, Надиле́...» . . —
«Кĕр çитсессĕн, савăк чунăм...» 35
Савнă тусăм, савнă пăчăр . . 36
Силпи енче тусем ем-ешĕл
«Силпи енче тусем ем-ешĕл...» . —
«Чул çинче сиксе...» 37
«Мĕн чул кунта сенкер çăлсем...» 38
«Сыв пул, Слакпуç! Хуш пул, Слакпуç...» 39
«Тĕксĕм эп пурнаттăм...» . . . . —
«Ялкăшатчĕç ун чух кăвар пек çăлтăрсем!..» 40
Çав чăна çаплах шанмасăр... . . —
«Шав сана курассăм ман килет...» 41
Куç умне тухайрĕ çак асаилÿ
«Алтăр куçлă тăмана...» . . —
«Ват Туйралăх хыçĕ... Карăш авăтать...» 42
Тунсăхларăм эп ку чух . . . —
«Ват утсем сĕнксе тăраççĕ...» . . . 43
УХĂ ЯТĂМ ХЫРЛĂХ ЛЕШ ЕННЕ
(Шăмпай асатте юррисем)
«Тĕпчĕкри асаттем — Нухайран...» . 44

«Çилçунатлă утсем, сар çуна...» . . —
«Шăн çурта пек чăрăш касрăм...» . 45
«Çеçенхир куянне, ай, шуйхатрăм...» —
«Сухала-ха, лашам, сухала...» . . 46
«Алла тытрăм тăмра калама...» . . —
Икĕ монолог
«Çупаларăм, ӳстертĕм тиха...» 47
«Урапа эп, хура урапа...» . —
«Эй, ялти ырпиллĕ ватăсем...» . . 48
«Ухă ятăм хырлăх леш енне...» . . —
«Пыллăх тăрăх чупрăм-чупрăм...» . 49
Эх, сар çуна, сар çуна... . . . . —
Хăватлă вут, таса кăвар... . . . 50
«И эпирччĕ, эпирччĕ...» . . . 51
«Пирĕн атте пĕрхĕт аçи...» . . . —
ИСКЕЙ ПАЙТУЛĔ
Поэма

Валем Ахун
(Валентин Осипович Максимов)

В ПУТЬ-ДОРОГУ ЗОВЕТ АРГАМАК

Стихи

Поэма

На чувашском языке

ИБ 1073

Редактор В. В. Синичкин. Художник В. А. Смирнов. Художественный редактор А. А. Афиногенов. Технический редактор Г. С. Самсонова. Корректор Л. Т. Захарова

Сдано в набор 23.11.81. Подписано к печати 19.03.82. НТ 14139. Формат 70×90/32. Бумага типографская № 1. Гарнитура литературная. Печать высокая. Физ. печ. л. 2,25. Усл. печ. л. 2,63. Усл. кр.-отт. 2,77. Учетно-изд. л. 2,95. Тираж 1500 экз. Заказ № 5378. Изд. № 51. Цена 30 коп.

Чувашское книжное издательство,
Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли,
Чебоксары, Канашское шоссе, 15.

30 пус.

ЧĂВАШ
КĚНЕКЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ